## Ухсай Яковĕ (1911-1986)

Яков Гаврилович Ухсай 1911 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче Ĕпхӳ кĕпĕрнин Пелепей уесĕн (халĕ Пушкăртстан Республикин Пелепей районĕ) Слакпуç ялĕнче çуралнă. Кунти икĕ класлă шкула ăнăçлă пĕтернĕ хыççăн вăл Пишпӳлекри хресчен çамрăкĕсен шкулне вĕренме кĕрет (1925-1928). Ĕпхӳре пурăннă (1928-1930), Халăха вĕрентес ĕçĕн институчĕн хатĕрлев уйрăмĕнче вĕреннĕ. Яков Гаврилович М. В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ (1930-1933). 1934 çулта Чăваш писателĕсен союзĕ чăмăртансан правлени секретарĕнче ĕçленĕ. Темиçе çул Мускавра чăвашла тухса тăракан «Коммунар» хаçатра ĕçленĕ, Пушкăрт АССР Совнаркомĕ çумĕнчи М. Гафури ячĕллĕ Чĕлхе, литература тата истори ăслăлăх тĕпчев институчĕн сотрудникĕ пулнă (1935-1936), Патăрьелĕнчи тата Ульяновскри педагогика училищисенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ (1937-1939). 1936 çулта Шупашкара куçса килнĕ.

1941 çул. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан Ухсай хăй ирĕкĕпе фронта кайнă, халăх ополченийĕн отрядне тăнă. 1942-мĕш çулхи çу уйăхĕнче стрелоксен 141-мĕш дивизийĕнче рядовой пулса çапăçнă, ăна «Максим» пулемет шанса панă. Воронеж фрончĕн окопĕсенче нушаланнă чухне ăна дивизи хаçатне ĕçлеме куçарни çинчен хушу илнĕ, çар корреспонденчĕ пулса тăнă: арми пичетĕнче ĕçленĕ. Çапăçу хирĕнче КПСС ретне тăнă (1943, çу), тăшман хупăрлавне лекнĕ. Ухсай – фронтовик, Совет Çарĕн ретĕнче Атăлтан пуçласа Прага таран çитнĕ, 1946 çулта демобилизаци йĕркипе таврăннă. Паттăрлăхпа хастарлăхшăн ăна I тата II степеньлĕ Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçин орденĕсемпе наградăланă.

Ухсай Яккăвĕн дневникĕнчен: «Паян – Танкист кунĕ. Эпĕ танк корпусĕнче – 4-мĕш гварди Кантемиров тата 31-мĕш Висла – служба тивĕçĕсене пурнăçланă, çĕр-çĕр статьяпа очерк çырнă. Çакă пĕтĕмпех манăçа тухнă».

Поэтăн Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсенчи пултарулăхĕнче «Н-мĕш дивизири боецсемпе командирсем чăваш халăхне янă çыру» поэма уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ, вăл 1943 çулта кун çути курнă. Поэмăра Чăваш Енре çуралса ӳснĕ çынсем, салтаксем, вăрçă паттăрĕсем çинчен çырса кăтартнă, «Хурçă та çуннă чух» кĕнекере Ухсай Яккăвĕ совет салтакĕсен паттăрлăхне тĕрĕс те ĕненмелле çырса кăтартнă.

Ухсай Яккăвĕ – поэт, драматург, публицист, куçаруçă, эпика енĕпе çырнă пысăк произведенисен авторĕ. Чăваш литературинче сăвăлла трагеди тата сăвăлла роман жанрĕсен аталанăвĕ ун ячĕпе çыхăннă. Унăн поэмисем – çын пурнăçĕн, хутшăнăвĕсен ӳкерчĕкĕсем, вĕсенче – чăваш халăхĕн кун-çулĕ.

Ухсай Яккăвĕ – тăван Чăваш Ен халăхĕн историйĕн поэт-çул çыравçи. Вăл аслă Гомера чи малтанах историк пек хаклатчĕ, унтан – поэт пек. Ухсай Яккăвĕн эпика произведенийĕсем:

«Çĕр» – Урал эпопейин пĕрремĕш кĕнеки. Вăл граждан вăрçин тапхăрне, унта чылай халăх – чăвашсем, тутарсем, пушкăртсем, вырăссем – хутшăннине çутатнă;

«Ту урлă çул» – коллективизаци тапхăрĕнчи чăваш ялĕ;

«Акăшкӳл» – вăрçă хыççăнхи колхоз ялĕ çинчен çырнă пысăк роман;

«Кĕлпук мучи» – «Ку – чăваш пурнăçĕн энциклопедийĕ», – тенĕ А. Твардовский. «Поэзири пысăк калăпăшлă произведенисенчен эпĕ Ухсай Яккăвĕн «Кĕлпук мучи» сăвăлла повеçне юлашки çулсенчи уйрăмах интереслĕ тата пĕлтерĕшлĕ пулăм тесе палăртнă пулăттăм». Ку – А. Фадеевăн шухăшĕ.

Поэмăсен ярăмĕ – «Ман ачалăх çăлтăрĕ» трилоги – Горький ячĕллĕ премие тивĕçнĕ.

Ухсай Яккăвĕн драматурги произведенийĕсем: «Ăраскал», «Шуйттан чури», «Тутимĕр» – Тутимĕр – Салават Юлаевпа пĕр шухăшлă çын, историре чăн пулнă, «Нарспи» – К. Ивановăн çак ятлă поэми тăрăх çырнă пьеса. «Хура элчел» – К. В. Иванов çинчен. Произведенисене автор çырнă чĕлхепе вуласан вĕсем талант вăйĕпе тата хăвачĕпе, хĕрӳлĕхĕпе Шекспир драмисемпе юнашар тăраççĕ.

Ухсай Яккăвĕ ӳтпе юн пĕрлĕхĕ, чăваш халăхĕн шăпин пĕрлĕхĕ.

«Ухсай – чăваш литературишĕн çеç мар, ытти литературăшăн та тĕлĕнмелле чаплă пулăм. Ухсай сăмахĕ – хăйĕн халăхне, хăйĕн Атăлне, хăйĕн çĕрне юратнине палăртакан сăмах. Ухсай поэзийĕнче эпир тĕлĕнмелле вăйлă поэта, çутă тата асра юлакан таланта, хăйĕн чунĕпе халăха çывăхскере куратпăр», – тенĕ паллă критик Александр Макаров.

Ухсай сăввисем: «Юратрăм эпĕ сире, уй-хирсем» пĕрремĕш хайлавĕ. Ăна 1929 çулта çырнă. Пĕрремĕш кĕнеки 1934 çулта пичетленнĕ.

Ухсай Яккăвĕн кĕнекисене уçакан пĕрремĕш сăвă «Калуш» ятлă. Унăн аппăшĕ Ульха капăр тумланма юратнă. 1926 çулта ялта калуш халĕ лакпа якатнă туфли пекех модăра пулнă. Ульха каярах шӳтлесе çапла каланăччĕ: «Эпĕ унран аслăрах вĕт, хĕрĕн мĕнле тăхăнмаллине вăл ăçтан пĕлтĕр».

«Самана» (2011 ç.) кĕнеке «Çамка çинчен тар ӳкнĕ чух...» (1925 ç.) сăвăпа уçăлать. Сăвă автографне эпĕ Слакпуçĕнче, Ухсай Яккăвĕн музейĕнче, тупрăм.

«Ухсай Яккăвĕн сăввисем, унта сюжет фабули, аллитераци, анафора, ассонанс, эпифора пур, тĕлĕнмелле ĕçсем. Ухсай Яккăвĕн сăввисемпе çырнă юрăсем пек сюжетлă юрăсем чăваш музыкинче сахал. Вĕсем хăйсемех кĕвĕ ыйтнăн туйăнаççĕ», – çапла палăртнă А. Илюхин музыковед, Чăваш Ен музыка культурин патриархĕ.

П. Е. Эйзин: «Ухсай Яккăвĕн произведенийĕсенче шалти илемлĕ янăравлăх пур».

Ухсай Яккăвĕ чăваш, тутар, пушкăрт чĕлхисене питĕ лайăх пĕлнĕ, хăйĕн произведенийĕсенче фольклорпа анлă усă курнă.

Пуçтарнă тата питĕ лайăх йĕркене кĕртнĕ материалсем тăрăх Ухсай хăйĕн чи пысăк тата пĕлтерĕшлĕ произведенине – «Чĕмпĕр эпопейине» çырнă. Вăл çапла каланă: «Манăн пурнăçăн тĕп кĕнеки вăтăр поэмăран тăракан «Чĕмпĕр эпопеи» шутланать. Эпĕ çакна питĕ шанатăп: асăннă кĕнеке, нумай çулăн шухăшлавĕн хатĕрĕ, вулакан чĕри çывăхĕнчен ахаль иртмĕ». Шел, çак кĕнеке пичетленмен.

Поэт пултарулăхĕн пысăк пайĕ чăваш литературин классикĕн К. В. Ивановăн еткерне тĕпчессипе çыхăннă. Ăслăлăхпа çыхăннă пысăк ĕçе пурнăçланă май вăл Константин Иванова çĕнĕрен чĕртсе тăратнă. Ухсай Яккăвĕ К. Иванов пултарулăхне халалласа очерксемпе статьясем çырнă. Вĕсем: «Лермонтов и Иванов», «О том, как К. В. Иванов переводил Некрасова», «К. В. Иванов и А. В. Кольцов», «Жизнь и деятельность К. В. Иванова», «О рукописях Иванова», «К. В. Иванов» (1940), «На родине «Нарспи», «Русская литература и Константин Иванов» (1941), «Всегда с нами» (1955), К. Ивановăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ пирки монографи (1940), «Хура шăпа» сăвăлла драма (1940).

К. Ивановăн произведенийĕн планĕн тĕрленчĕкĕсем тăрăх Яков Ухсай укçа этемĕн ăсĕпе тата вăйĕпе хуçаланни çинчен «Шуйттан чури» трагеди çырнă.

Ухсай Яккăвĕ çавăн пекех «Нарспи» трагеди инсценировкине хатĕрленĕ, автор К. Ивановăн «Нарспи» поэмин тĕп геройĕсемпе тата темăпа пĕр килтернĕ çĕнĕ произведени çырнă.

Ухсай Яккăвĕ вырăс вулавçине Константин Ивановпа паллаштарнă. Вăл А. Твардовскипе «Нарспи» поэмăна вырăсла куçарасси пирки канашланă. Вăл Ухсая Б.Иринин куçаруçăна сĕннĕ. «Нарспи» поэма çапла майпа вырăсла пичетленнĕ.

А. К. Князев журналист Ухсая Çеçпĕл сăввисене куçарма ыйтнă, сăмахран сăмах куçарнисене илсе пынă. Анчах Ухсай чăвашла çырнă. Вăл Е. Исаевран пулăшу ыйтнă. Егор Николай Панченко куçаруçăна сĕннĕ. Халĕ эпир Çеçпĕлĕн паха куçарăвне киленсе вулама пултаратпăр.

Ухсай Яккăвĕ çамрăк поэтсемпе яланах пĕр чĕлхе тупнă, вĕсене пулăшнă, çапла каланă: «Çынсемпе кăнттам пулни вĕсен хутшăнăвĕн пахалăхне япăхлатать».

Ухсайăн пултарулăхĕнче литературоведени пысăк вырăн йышăнать. Ухсай Яккăвĕ Мускав патшалăх университечĕн филологи факультетĕнче В. В. Виноградов, Н. И. Моор, С. И. Ожегов, Д. Н. Ушаков, Л. В. Щерба тата ытти чаплă преподаватель патĕнче вĕреннĕ. Ухсай Яккăвĕ Лермонтов, Пушкин, Некрасов, Кольцов, Çеçпĕл Мишши (1930), Габдулла Тукай, Хасан Туфан, Сайфа Кудаш, Муса Джалиль тата ыттин пултарулăхĕ

пирки монографи çырнă. Вĕсен сăввисене куçарнă. 1985 çулта Габдулла Тукайăн «Шурале» кĕнеки тухнă, ăна чăвашла Ухсай Яккăвĕ куçарнă.

Ухсай – пултаруллă, вăйлă публицист. Унăн çав вăхăтшăн çивĕч очеркĕсемпе статйисем: «Халăхсен туслăхĕ», «Пурçăн хурчĕ» (1938), «Çĕрпе çыхăннă шухăшсем» статьясен ярăмĕ çак ĕçсенчен тăрать: «Пĕчĕк юхан шывсен инкекĕ», «Юхан шыв илемлĕччĕ...», «Çĕр макăрсан», «Вăрмансем, шывсем тата заводсем çинчен...», «Тăван çĕр çинчен сăмахăм», «Кĕтне шывĕн инкекĕ», «Пурнăçпа тимлĕ пулмалла», «Сӳрĕклĕх преступленипе танлашсан» тата ыттисем. Ухсай Яккăвĕн дневникĕнчен: «Ман шухăшăмпа, хальхи вăхăтра тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем нерв тытăмĕ пăтрашăннипе чирлеççĕ тата чĕре инфаркĕнчен сахал мар вилеççĕ». Çут çанталăка хӳтĕлесе 25 ытла статья çырнă. Вĕсем хăйсен пĕлтерĕшне халĕ те çухатман.

«Çĕр, нумай-нумай сăмах ун пирки, апла пулин те лайăх произведени сахал çырнă...» – палăртнă поэт хăйĕн дневникĕнче.

Я. Ухсай – чăваш поэзийĕн классикĕ. Унăн сăвăсен, поэмăсен, очерксемпе романсен кĕнекисем 60 ытла. Произведенийĕсене ССР Союзĕнчи 20 халăх чĕлхине куçарнă, çавăн пекех пăлхарла, венгрла, полякла, французла, чехла пичетленĕ.

Я. Г. Ухсай Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн 5-мĕш созыври (1959-1963 ç.ç.) депутачĕ пулнă. Депутат пулнă çулсенче Хуракассинче йывăç шкул 100 ытла вĕренекенпе çунса кайнă. «Кĕлпук мучишĕн» панă гонорарпа вăл Сиккассинчи çакăн евĕр шкул вырăнне чул шкул тутарттарнă. Ку шкул – Кĕлпук мучин шкулĕ.

Чăваш литературипе искусствине аталантарас ĕçри тава тивĕçлĕ çитĕнӳсемшĕн Ухсай Яккăвĕ Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ (1945), Чăваш Ен халăх поэчĕ (1950) ятсене тивĕçнĕ (вăл Чăваш Енри халăх поэчĕсенчен чи çамрăкки пулнă). Яков Гаврилович çавăн пекех Ленин, Октябрь Революцийĕн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав тата «Хисеп Палли» орденсен кавалерĕ. Ăна РСФСР тата ЧАССР, Пушкăрт АССР тата Тутар АССР Верховнăй Совечĕсен Президиумĕн Хисеп грамотисемпе наградăланă. Ухсай Яккăвĕ «Ман ачалăх çăлтăрĕ» трилогишĕн литература енĕпе паракан К. В. Иванов ячĕллĕ ЧАССР Патшалăх (1971) тата А. М. Горький ячĕллĕ РСФСР патшалăх (1972) премийĕсене тивĕçнĕ. Унăн ятне ЧАССР Ĕç Мухтиавĕпе паттăрлăхĕн Хисеплĕ кĕнекине кĕртнĕ.

Ухсай Яккăвĕн поэзи тата пурнăç çулĕ çăмăл килмен, анчах та тӳрĕ пулнă. 1937 çулта ăна халăх тăшманĕ тесе пĕлтернĕ – парăнман, чăтса ирттернĕ.

«Атте тата анне енĕпе тивекен тăвансенчен чылайăшне виçерен тухса алхаснă çулсенче кулак тесе айăпланă, тăван çĕрĕнчен тĕпренех кăкланă. Чаплă Константин Иванов, вун çичĕ çултах «Нарспи» поэма çырнăскер, манăн виççĕмĕш сыпăкри пичче. 1930 çулта унăн икĕ шăллĕне кулак тесе айăпланă, чул çуртне те, поэт пурăннă тата чунĕ

тухнăскере, туртса илнĕ. Çапах та эпĕ «Туй» колхоз поэми çырма пултартăм, Хусанкайпа пĕрле чăваш халăх ячĕпе Сталин патне çыру çыртăм. Сăвăлласа çырнă çак çыру 1937 çулта кун çути курчĕ, çав çулах мана тăшман тесе пĕлтерчĕç, ĕçлес тата пичетленес правасăр хăварчĕç. Ырă çынсем мана педучилищĕре преподавательте ĕçлеме ирĕк пачĕç. Кĕçех çак ĕçрен те кăларса сирпĕтрĕç, çакăн пирки республика пичетĕнче анлăн пĕлтерчĕç. Пысăках мар ялта урама тухсан та манран пăрăнатчĕç, мур чирĕнчен хăранă пек хăратчĕç. Кил хуçи, тахçан малтан ун патĕнче паллă поэт пурăннипе мухтаннăскер, куççулĕ витĕр мана çак кĕтесе пушатма ыйтрĕ. Мĕнле йышăну тăвасса кĕтсе эпĕ тертленсе асаплантăм, хамшăн мар, аттепе анне, пиччесемпе аппасен шăпишĕн кулянтăм. Эпĕ çĕр-шывпа халăх умĕнче хамăн нимĕнле айăпа та пĕлместĕп. Çĕрле допрос тума илсе каятчĕç, айăпа йышăнма мар, патшалăха хирĕçле организацире тăнине çирĕплетме ыйтатчĕç. Пуçлăх юпа уйăхĕнчи пĕр каç хăйĕн допросĕпе мана уртарсах ячĕ, пистолетне туртса кăларчĕ те çапла кăшкăрчĕ: «Персе вĕлеретĕп!» Вăл сасăсăр пулса ларчĕ, ыввăннипе пистолетне сĕтел çине хучĕ. Эпĕ çак пистолета илтĕм те ăна пуçлăх çамки патне илсе пытăм, унтан çапла каларăм: «Алă пусăр, мана сирĕн районтан тухса кайма ирĕк парăр». Вăл хут çине алă пусрĕ». Ку йĕркесене В. Туркин патне çырнă çыруран илнĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи – фронтран мăшăрĕ патне янă çыруран: «Эпĕ чĕрĕ юлатăп, Çĕнтерӳ хыççăн таврăнатăп». Салтак фронтран çĕнтерӳçĕ пулса таврăннă – пурăн, ĕçле.

Анчах та вырăнти тăрлавсăр чиновниксем поэта хĕсĕрлеме пуçланă. Çĕр-шывăн ун чухнехи тытăмĕ çапларах – «Эпĕ – пуçлăх, эсĕ – ухмах» – пулнă. Çав «марионеткăсем» мĕн çырмаллине тата мĕнле çырмаллине вĕрентсе тăнă. Чи пĕлтерĕшлине «тĕвнĕ»: Ухсай Яккăвĕн произведенийĕсене пичетлеме пĕр хут мар чарнă. Ухсай Яккăвĕ дневниксенче çапла çырни пур: «Чăваш литературинче:

1. Улпутсем, укçа юратакан чиновниксем.
2. Лавçăсем.
3. Йывăр лав лашисем.
4. Литфонда çиекенсем.

Манăн пултарулăх кун-çулне тата юна редакцисене, издательствăсене, Писательсен союзне обком лартнă чиновниксем пĕрмаях пăсатчĕç. Произведенисене вăхăтăн çав саманчĕ ыйтнă пек тӳрлетсе çырма хушатчĕç. Америка пирки темле хушусем пулсан пĕр ăссăрскер манăн «Акăшкӳл» романа тытса чарчĕ, Америка корреспонденчĕсем пирки çырнă шӳтлĕ сыпăка кăларса пăрахтарчĕ. Манăн «Ту урлă çул» тата «Кĕлпук» мучи» произведенисене пур çĕрте те – пичетре те, пухусенче те – тустарчĕç. «Ту урлă çул»

вырăсла пичетленчĕ. Çавăн хыççăн кăна ăна, произведение Мускав Сталин премине илме тăратнă хыççăн, чăвашла кăларчĕç».

1971 çулта çапла йышăннă: Ухсая Писательсен союзĕнчен, партирен кăлармалла. Пичетленме чарчĕç. Çав вăхăтра Мускавра «Ман ачалăх çăлтăрĕ» трилоги кун çути курчĕ, Ухсай Яккăвне Горький ячĕллĕ премие илме тăратрĕç. Çавăн чухне тин «Ман ачалăх çăлтăрĕ» кĕнекене Шупашкартаваскасах пичетлерĕç.

Шăпа Ухсая иртĕхтермен. Талант, ĕçе юратни, ĕçлес пултарулăх пысăкки, ăс, шӳте ăнланни – акă мĕн ăна пурнăçра тата пултарулăхра пулăшнă.

Юлташĕсем чикĕ леш енне куçса кайма сĕнетчĕç. Аттен туссем нумайччĕ. Мана час-часах çапла калатчĕ: «Хĕрĕм, эпĕ туссемпе пуян».

«Кăмăлĕпе, воспитани енĕпе интернационалист пулнă май чăваш поэчĕ вырăс поэчĕсемпе çеç мар, литературăри хăйĕн тутар, пушкăрт ĕçтешĕсемпе те туслă пулнă. Вăл Муса Джалиль пирки хăйĕн аса илĕвĕсене хăварнă, Хасан Туфан, Мажит Гуфури, Рашид Нигамати тата ыттине, кăсăклă пурнăç кампа çыхăнтарма пултарнă, кама хăйĕн тус-юлташĕ теме пултарнă, çавсене час-часах аса илетчĕ. Анчах та вăл нихçан та никама та ăмсанмастчĕ, çăмăл мухтав шырамастчĕ, кирек мĕнле майпа та пулсан паллă çын пуласчĕ тесе ăнтăлмастчĕ. «Манăн хамăн чăваш поэзийĕн ăсти пулмалла», – тесе çыратчĕ вăл çак йĕркесен авторне. «Пулмалла...» Чăваш халăх поэчĕн ятне çӳлте тытса пынă май унăн çав ят пулман та тейĕн!..» – Вадим Дементьев.

Ухсайăн литература саппасĕ питĕ пысăк – классика, унăн хайлавĕсене чаплă поэтсем, унăн тусĕсем куçарнă: Егор Исаев, Михаил Светлов, Ярослав Смеляков, Николай Старшинов, Владимир Цыбин, Николай Чуковский тата ыттисем те.

Вăл ӳпкелешме пĕлмест, вăл мĕскĕн чăваш мар, Ухсай Яккăвĕ – чăваш поэчĕ. Вăл тăван чĕлхепе шухăшлать тата çырать. Унăн кун-çулĕ синкерлĕ. Вăл Чăваш Ене шанакан çын пулса юлнă. Ухсай Яккăвĕ Халăх поэчĕ ятпа хăйĕн пурнăç тăршшĕне тивĕçлĕ тата чыслă утса тухнă.

1981 çул, Мускав. Литераторсен тĕп çуртĕнче Ухсай Яккăвне чысланă. Сăмах калакансенчен пĕри Ухсай халăхран тухнине палăртнă. Хăйĕн хурав сăмахĕнче поэт çапла тавăрса каланă: «Эпĕ нихăçан та халăхран тухман, эпĕ яланах ун чĕринче пурăннă».

«Пулнă халăхпа тата халăхра,

Вăл та манпа юнашар».

Ухсай Яккăвĕ хăйĕнче чун, кăмăл-сипет шăнăрне, интеллект харсăрлăхне сыхласа хăварма пултарнă, пултарулăхĕнче – романтика чунне, пурнăçа юратнине тата унта хастар пулмаллине.

Я. Г. Ухсай – общество деятелĕ, вăл чăваш халăхĕн кун-çулĕпе пурăннă, пысăк хисепре тăнă. Ун патне чăнлăх шыраса пынă.

Пĕр палламан çынни те манăн тусăм,

«Ухсай» тесе калатăп çеç ята.

Пароль е паспорт пек кӳрет вăл усă

Ку комплимент пулмарĕ ан ятла.

(А. Юман)

Я. Г. Ухсай тăван чĕлхене, чăваш шкулĕсене сыхласа хăварассишĕн кĕрешнĕ.

Дневниксенчен:

«...Культура деятелĕсем пурăнаççĕ: халăха та, унăн музыкине те тарăн пĕлмеççĕ. Ман шухăшпа, халăх наци катастрофи, ăс-хакăл вилĕмĕ еннелле пырать, ерипен – мăшкăл вилĕм çулĕпе.

Чăваш искусстви вырăс «тумĕпе» пурăнма пултараймасть.

Тилĕсем хатĕр шăтăксене хĕсĕнсе кĕреççĕ те хăйсен ирсĕр шăршипе пурăшсене хăваласа кăлараççĕ. Литературăра та çаплах пулса иртет».

Чăваш шкулĕсене хупса пĕтерчĕç, çапла тăвас тесе чиновниксем ĕнентерӳллĕ сăлтавсем тупса кăларчĕç, анчах нихăшĕ те шкулсене мĕнле сыхласа хăварасси пирки шухăшламан.

Таврăнайми тапхăр пуçланчĕ.

Чăваш чĕлхи – чи авалхи чĕлхе. Хăйĕн тăван, пуян, илемлĕ чĕлхине халăх ĕмĕрсен хушши упранă. Чăваш чĕлхи – тĕрĕк чĕлхисен çемйинчи ахах-мерчен.

Дневниксенчен:

«Кайбулка шывĕн çыранĕсенчи «Шупашкар марксисчĕсем» çинчен çырнă калава автобиографие кĕртмеллех. Чĕлхе тата литература ăслăлăх-тĕпчев институчĕ Кайбулкăн сылтăм çыранĕнче, чылай урампа тата пасарпа вараланса пĕтнĕскерте, вырнаçнă. Çак институтах «паттăрлăхпа» палăрчĕ – Н. И. Ашмарин словарьне юрăхсăра кăларчĕ. Малтанхи çичĕ тома автор хăй хатĕрленĕ, ыттисене – «Шупашкар марксисчĕсем». Вĕсем наци культурин кирек хăш тытăмĕнче те, политикăра та сиен кӳнĕ, халĕ те кӳреççĕ».

1964 çулта Яков Гаврилович РСФСР Аслă тата вăтам вĕренĕвĕн министрĕ, Пушкăрт КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, Пушкăрт патшалăх университечĕн ректорĕ ячĕсемпе çыру çырнă пулнă. Унта çапла каланă: «Эпир, чăваш писателĕсен, ăслăлăхпа çут ĕç ĕçченĕсен ушкăнĕ, Ĕпхӳри Пушкăрт университетĕнче вырăс-чăваш филологийĕн уйрăмне уçас ыйтăва пăхса тухма ыйтса çыратпăр.

Университет пĕлĕвĕ илнĕ филолог специалистсем Чăваш АССРĕнче питĕ кирлĕ. Пирĕн хамăрăн университет çук. Çĕр-шыври пĕр университетра та чăваш чĕлхине

вĕрентмеççĕ. Çав вăхăтрах республикăра культура тата ăслăлăх пурнăçĕ ӳссе пынă май филологи тĕлĕшĕнчен хатĕрленнĕ, тăванла тĕрĕк чĕлхисене пĕлекен, вĕсен истори аталанăвĕпе пайтах паллашнă специалистсене ыйтать. Çакăн йышши кадрсем кӳршĕллĕ халăхсен хушшинчи культура пуянлăхĕпе паллашма та кирлĕ...»

Ырă пуçарупа çырнă çак çырăва чиновниксем хăратни пек йышăннă. Çыру авторне тата ун айне алă пуснă ытти çынна националист тесе айăпланă. Вĕсене КПСС Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретаре С. М. Ислюков, ăслă çын, инкекрен çăлса хăварнă, анчах та çут ĕç министрне, хăй çамрăк пулнăран мĕн айне алă пуснине чухлайманскере, ĕçрен хăтарнă. Хирĕç тăрăва çапла лăплантарнă, культура ĕçченĕсене пĕтме паман.

Ухсай Яккăвĕ хăйĕн тĕллевĕнчен пăрăнман. Ку пуçламăшĕ çеç пулнă. Республикăра хамăрăн университета уçас ыйту çĕкленнĕ. 1967 çулта – Чăваш патшалăх университечĕ çуралнă, 1994 çулта вара Пушкăртстанри Стерлитамак хулинчи педагогика институтĕнче (халĕ патшалăх педагогика академийĕ) – тутар тата чăваш филологийĕн кафедри.

Тĕлĕнмелли акă мĕн: «инкек» тӳснĕ чиновник, çут ĕçĕн унчченхи министрĕ (халĕ вăл пединститутра ĕçлет, кафедра ертсе пырать) Я. Г. Ухсайпа С. М. Ислюкова тавăрма тытăннă: çăхавсем çырнă, сас-хура сарнă. Ухсай Яккăвĕн тăшманĕсенчен пĕрне С. М. Ислюков çапла каланă: «Ухсая кӳрентермелле мар, вăл пирĕн пĕрре». Лешĕ, кӳреннĕскер, Мускава тухса кайнă, унта пысăк карьера тунă. Кун-çулĕн вĕçĕнче, 2011 çулта эпир унпа Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче тĕл пултăмăр. Инçетренех асăрханă мана, коридорăн тепĕр вĕçĕнчен пычĕ те ыталаса илсе чуп турĕ тата çапла каларĕ: «Эпĕ айăпа йышăнасшăн – эпĕ тĕрĕс мар, Ухсай тĕрĕс пулнă».

1985 çулхи раштав уйăхĕнче Ухсай Яккăвĕ Мускава писательсен VI съездне кайнă.

Кремльте вăл çут ĕç министрĕпе, нефтьпе газ промышленноç институтĕнче пĕлӳ илнĕскерпе, курса калаçнă. Ун чухне Шупашкарта чăвашла вĕрентекен юлашки шкула хупнă.

Ку унăн пурнăçĕнчи юлашки пысăк ĕçĕ пулнă.

«Ухсай Яккăвĕ – çирĕп кăмăллă тата тĕрĕс çын» (Ю. С. Сементер).

Вăл пире хăйĕн сăввисемпе поэмисене, тарăн лирикăллă тата пурнăçăн чи çивĕч темисене хускатнăскерсене, чăн-чăн Ăста çырнăскерсене, хăварнă.

«Ухсай – халăх поэчĕ! Ухсай – вилĕмсĕр поэт! » (В. Давыдов-Анатри).

«Эпĕ яланах пурне те çапла калатăп: чăваш чĕлхине пĕлес тесен – Ухсай Яккăвне вула». Кусем Чăваш академи драма театрĕн пултарулăх ертӳçин Валерий Яковлевăн сăмахĕсем.

Ухсай О.Я.